# И.Я. Яковлев пирĕн асăмра (Тавçăруллисемпе хаваслисен конкурсĕ)



Чăвашсен пур чаплă çын,
Пурте ун ятне пĕлеççĕ,
Ваттисем калаçнă чух
Ырăпа çеç асилеççĕ.

А. Кăлкан.

# Çыхăнуллă калав тăвăр

- И.Я. Яковлев Тутар республикинче Кăнна Кушки ялĕнче çуралнă.
- Сакăр çулта Ивана шкула вĕренме янă.
- Вăл Чĕмпĕр гимназине вĕренме кĕнĕ, мĕншĕн тесен унăн питĕ вĕренес килнĕ.
- Унта вĕреннĕ чух И.Я. Яковлев чăваш шкулне уçнă.
- Пултаруллă ача Хусан университетĕнче вĕреннĕ.
- Вĕрентекенсем тата юлташĕсем пулăшнипе вăл чăваш алфавитне тăвать, букварь кăларать.
- И.Я. Яковлев - чăваш халăхне çутта кăларакан çын. Унпа халăх мухтанать, ăна тав тăвать.

(И.Я. Яковлев çинчен сырнă предложенисене пăтраштарса хунă.)



# 4 – мĕш ĕç.

Предложенисене кирлĕ хисеп ячĕсем лартăр. И.Я. Яковлев пурнăçĕ çинчен предложенисем тĕрĕс йĕркелĕр.

… çулта çуралнă.
… çулта Пăрăнтăк удел шкулне кайнă.
… çулта Чĕмпăр чăваш шкулне уçнă.
… çулта чăвашсен пĕрремĕш алфавитне йĕркеленĕ.
Пĕрремĕш алфавитра … сас палли пулнă.
… çулта чăвашсен пĕрремĕш букварьне кăларнă.
И.Я. Яковлев … ача пăхса ӳстернĕ.
… çулта вилнĕ.

**(1868; 1872; 1848; 1930;1871; 5; 1856; 47)**

# Физкультминутка

Лайăх сывлăх кирлĕ пурнăçра пире.

Чи малтан çапла ту: сыхла ӳт-тире.

Аллуна, мăйна çу; тап-таса тумлан.

Час-часах шыва кĕр.  Вăхăтра эс кан.

# Калавсене пĕлĕр

1. Ĕçлесе çисен çăкăр та тутлă, тăрансан, пыл та йӳçĕ.
2. Çапа пĕлмен пушă хăйне çавrăнса тивнĕ.
3. Ахаль лариччен кĕрĕк арки йăвала.
4. Аптăранă кăвакал кутăн чăмнă.
5. Аçу-аннӳне хисепле, хăвнах аван пулĕ.

(Кулачă. Михала. Усăсăр тавлашни. Çил-тăвал. Пирĕн кил-йыш).

# Пантомима



«Кулачă» калава хăш ушкăн хусканусемпе мĕн çинчен иккенне тĕрĕсрех кăтартса парĕ.

# «Пулас режиссёр» - конкурс

## Вуланă калавсем тăрăх эпифильм хатĕрлени .



# 8 – мĕш ĕç.

| 1<br>аăбвг | 2<br>деёĕж | 3<br>зийклн |
|---|---|---|
| 4 мно | 5 преçт | 6 уӳфх |
| 7 цчш | 8 щъы | 9 ьэюя |

Çак таблицăпа усă курса И.Я. Яковлевăн  професси не пĕлĕр

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 5 | 8 | 5 | 1 | 1 | 5 | 1 |

# Чăвашсен пур сумлă çын

Чăвашсен пур сумлă çын,
Пурте ун ятне пĕлеççĕ,
Ваттисем калаçнă чух
Ырăпа çеç ас илеççĕ.

Хăть чăваш эс, хăть тутар,-
Пурпĕрех пĕлмешкĕн тивĕç:
Ача чух вăл çу хута
Кĕтÿçре çÿренĕ имĕш.

Пĕчĕкрен вăл пит ăста
Çăпата тума вĕреннĕ;
Яш пулсассăн, Хусанта
Кĕнеке тытса çÿренĕ.

Вырăссем пулăшнипе
Вĕренме ăна май килнĕ
Пултаруллă пулнипе
Пит нумай пĕлÿ вăл илнĕ

Чăвашран вăл пуçласа
Университет пĕтернĕ.
«Халăхшăн вăя хурса
Халь ĕçлес пулать ман», -тенĕ.

Чăвашсем валли вара
Чĕмпĕрте вăл хăй шкул уçнă
Букварьсем çыра-çыра
Пулнă шурă юр пек пуçлă.

Аллă çул хушши çутта
Чăваша çав çын кăларнă.
Халĕ пединститута
Чăвашсем ун ятне панă.

Каламарăм ун ятне-
Вăл пуриншĕн те халь паллă,
Маншăн та вăл – чăн атте;
Сăввăм пултăр асăнмалăх.

Александр Кăлкан

# Тест

1.Кăçал И.Я. Яковлев çуралнăранпа миçе çул?
а) 100;
ă) 150;
б) 162.

2. Вăл мĕнле уйăхра çуралнă?
а) пуш;
ă) ака;
б) çу.

3. Чи малтан И.Я. Яковлев кам пулнă?
а) вĕрентекен;
ă) çĕр виçевçи;
б) çыравçă.

4. И.Я. Яковлев университетра мĕнле хулара вĕреннĕ?
а) Шупашкарта;
ă) Чĕмпĕрте;
б) Хусанта.

5. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ камсене хатĕрленĕ?
а) вырăс чĕлхи вĕрентекенĕсене;
ă) пуçламăш класс вĕрентекенĕсене;
б) акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕсене.

6. И.Я. Яковлевăн вĕренекенĕ кам пулнă?
а) А.Г. Николаев;
ă) К.В. Иванов;
б) П. П. Хусанкай.

7.Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕпе çыхăннă вырăнсем.
а) шкул, клуб, театр;
ă) стадион, район;
б) палăк, проспект, педагогика университечĕ, музей.

# Иван Яковлевич Яковлева чăваш халăхĕ паян кун та ырăпа асăнать, пархатарлă ĕçсемшĕн тав тăвать.






Чăваш  педагогика университетĕнчи И.Я.Яковлев музейĕнче.








Чăваш университетĕнчи Н.И.Ульяновпа И.Я. Яковлев музейĕнче.

